Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

45 (7787) № * Эрне кун, 2010 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 11-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Вăй хунин кăтартăвĕ куç умĕнче

**Конкурсран**

*Тĕп дояркăсем хушшинче В. Макарова (варринчи), Г. Ковалева, Н. Журавлева ыттисемшĕн тĕслĕх пулчĕç.*



Ял хуçалăхĕнче ĕçлеме нихăçан та çăмăл пулман. Апла пулин те хресчен йывăрлăхсенчен хăрамасăрах çĕр ĕçне пĕр вырăнта тăратман, шав малалла аталантарнă. Кулленхи ĕçре тăтăшах çĕннине алла илнĕ, ырă опыта малалла çул уçса пынă. Çак тимлĕх ял хуçалăхĕнче паян та çухалман. Ăна никам та хирĕçлемĕ, хирĕçлеймĕ те. Юлашки çулсенче РФ Президенчĕ палăртнă «АПК аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕ ял хуçалăх предприятийĕсене, ялта пурăнакансене çĕнĕ аталану çулĕпе кайма май туса пачĕ. Мĕн тетĕр эсир? Пăр тапранчĕ, малашлăха шанса çанă тавăрса ĕçе кӳлĕннисен ĕç продуктивлăхĕ ӳсрĕ. Анчах кун йĕркинче темĕнле проект-программа пулсан та, конкретлă ĕçлекен ăсталăхĕ малти вырăнта тăрать. Вăл çапла пулнă, пур, пулĕ те.

Çавăнпа та обществăлла вырьăх-чĕрлĕх патĕнче чунне парса ĕçлекенсен малтуртăмлăхне аталану çулĕ çинче пурнăçпа тан илсе пырас тĕллевпе район администрацийĕ çулленех машинăпа ĕне сăвакан операторсемпе техник-осеменаторсен конкурсне ирттерет. Кăçал та çак ырă пуçару кун йĕркинчен тухса ӳкмерĕ.

Уяр çанталăк-и е пĕлĕтлĕ кун – ĕçлекеншĕн çул уçă. Çав вăхăтрах пурнăçлама пултарайман ĕç пирки хĕрсе кайсах калаçакансем пирки ĕмĕртен пуш параппан çапакан тесе хакланă. Çак каларăш пурнăçра чылай чух тӳр килсе пырать пулсан та, "Свобода" ял хуçалăх производство кооперативĕ-ăратлă выльăх заводĕнче каланине ĕçпе çирĕплетесси кун йĕркинчи çирĕп йăла. Вуншар çул пырать вăл, çĕр-шыври политикăпа экономикăн нихăш хумĕ айне те пулман. Мĕнре-ха сăлтавĕ? Çак ыйту çине хурав шыраса районăмăр çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнче «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕн Йӳçкасинчи сĕт ферминче хамăр енри пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи ĕнесене машинăпа сăвакан операторсемпе ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерекен техник-осеменаторсен конкурсне ирттерчĕ. Палăртнă вăхăта конкурса хутшăнакансемпе командăсен представителĕсем фермăна нумаййăн пырса çитрĕç.

(Вĕçĕ 3 стр.).

**Чăваш автономине туса хунăранпа 90 çул çитнĕ май**

## Учитель – патшалăхăн пархатарлă ĕçченĕ

Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче Чăваш автономине туса хунăранпа 90 çул çитет. Ун чухне Пĕтĕм Раççейри тĕп ĕçсене туса пыракан халăх комиссарĕсен канашĕ çакăн пек йышăну кăларнă: «Раççей Федерацийĕн Социализмла Совет Республикинче Чăваш автономине туса хурас, унăн административлă центрне Шупашкар хули тесе палăртас, унта Хусан кĕпĕрнинчен Çĕрпӳ, Етĕрне тата Шупашкар уесĕсене пĕтĕмпех, Чикме уесĕнчен Янгильдино, Сюндыр, Тутаркасы, Шурча тата Кĕçĕн Хураçка вулăсĕсене, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчен – Курмăш уесĕнчен Атаевск, Курмăш, Алгаш вулăсĕсене, Пăва уесĕнчен Хăмпуç-Патăрьел, Мурат, Турхан, Шăмăршă тата Шомкин вулăсĕсене кĕртес».

Вăл тапхăрта наци ыйтăвĕсене çак ĕçпе ĕçлекен халăх комиссариачĕ туса пынă. Чăвашсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссариата 1918 çулхи пуш уйăхĕнче туса хунă. Наци комиссариачĕ вырăнти органсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлесе пынă. Çав çулхинех чӳк уйăхĕн 13-мĕшĕнче халăха вĕрентес тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссариатпа наци шкулĕсем хушшинчи çыхăнусем çинчен калакан йышăну кăларнă. Çак йышăнупа килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕнчи шкулсен ĕçне çĕнĕлле йĕркелесе янă.

(Вĕçĕ 2 стр.).

## Ирĕклĕх, туслăх, килĕшӳ уявĕ

**Июнĕн 12-мĕшĕ – Раççей кунĕ**

*Раççей кунĕ е Раççей никама пăхăнманлăх кунĕ (ку уява 2002 çулччен шăпах çапла палăртнă) – çĕр-шыври чи «çамрăк» патшалăх уявĕсенчен пĕри. 1994 çулта Раççейăн пĕрремĕш президенчĕ Борис Ельцин хăйĕн указĕпе июнĕн 12-мĕшне патшалăх пĕлтерĕшĕ панă – ку вăл Раççейăн патшалăх суверенитечĕ пирки деклараци йышăннă кун.*

Документне хăйне тăватă çул маларах РСФСР халăх депутачĕсен пĕрремĕш съездĕнче алă пуснă. Вăл вăхăтра Совет Союзĕн йышне кĕнĕ республикăсем пĕрин хыççăн тепри никама пăхăнманнисем пулса тăнă. Каярахпа ку куна ансатрах Никама пăхăнманлăх кунĕ тесе палăртма тытăннă. Сăмах май шăпах ĕнтĕ июнĕн 12-мĕшĕнче «никама пăхăнманлăхпа» пĕрлех пĕтĕм халăхпа пĕрле хамăрăн çĕр-шывăн пĕрремĕш президентне суйланă.

Епле пулсан та халăхра ку куна тĕрлĕрен асăннă. Раççейăн çĕнĕ историйĕ пуçăннине палăртакан патшалăхăн тĕп уявне туса хурас енĕпе тунă малтанхи утăм кăнттамрах курăннă. Халăха ыйтса тĕпченĕ май Раççейре пурăнакансем çак уявăн пĕлтерĕшне пачах та уяманни палăрнă. Ытларахăшĕшĕн июнĕн 12-мĕшĕ черетлĕ канмалли кун пулнă: ăçта та пулин канма кайма май пур е пахчара йăрансем çинче ĕçле. Малтанах хăшĕсем ĕçе çитме те тăрăшнă. Раççейри хуласенче, паллă ĕнтĕ, массăллă хаваслă мероприятисем йĕркеленĕ. Çапах та уяв анлăлăхĕ çитсех кайман.

1998 çулта хăйĕн сăмахĕнче Борис Ельцин июнĕн 12-мĕшĕпе çыхăннă тĕрлĕрен сăмах-юмаха пăрахăçлас терĕ, çак куна Раççей кунĕ тесе паллă тума сĕнчĕ. Официаллă майпа уявăн çĕнĕ ятне 2002 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче çĕнĕ Ĕç кодексĕн положенийĕсем пурнăçа кĕнĕ май çирĕплетнĕ.

Халĕ Раççей кунĕ – пур çыннăн саккунпа тата тĕрĕслĕхпе çыхăннă ирĕклĕх, гражданла туслăх тата ырă килĕшӳ уявĕ. Çак уяв – наци пĕрлĕхĕн тата Тăван çĕр-шывăн хальхи тата пулас шăпишĕн пурте ответлă пулса тăнин символĕ.

## Вĕренӳ тӳлевсĕрех пулать

Юлашки вăхăтра вĕренӳ тӳлевлĕ пуласси пирки тĕрлĕ сăмах çӳрет. Çынсен тӳлевсĕр вĕренме право пуррине Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе (43 статья) тата Раççей Федерацийĕн «Вĕренӳ çинчен» саккунĕпе (5 статья) çирĕплетнĕ.

2010 çулхи майăн 8-мĕшĕнчи 83-ФЗ № Раççей Федерацийĕн федераллă саккунĕпе килĕшӳллĕн патшалăх тата муниципаллă учрежденисене (шкулсем) хăй тĕллĕн аталанакан çул çине кăларас ĕç вĕренӳ тӳлевлĕ пулать тенине пĕлтермест. Шкулсене патшалăх заказне пурнăçланăшăн укçа тӳлессипе çыхăннă ку ыйту. Патшалăх заказĕ вара пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн патшалăх стандарчĕсемпе никĕсленнĕ.

Çапла вара малтанхи пекех шкул программинчи пур обязательнăй предмета палăртнă калăпăшпа вĕрентме бюджетран укçа-тенкĕ куçараççĕ. Обязательнăй предметсем шутĕнче: вырăс чĕлхипе литератури (литература вулавĕ), математика, физика, хими, биологи, истори, обществознани (экономикăпа право предмечĕсемпе пĕрле), искусство (музыка, ИЗО, МХК), технологи (труд), физкультура, географи, природоведени (тăван тавралăх), ют чĕлхе, тăван чĕлхепе (вырăс мар) литератури, информатикăпа ИКТ, ОБЖ.

Стандартпа килĕшӳллĕн эрнере ултă кун вĕрентекен шкулсенче уроксем çак шутлă пулмалла: 1 класра – 20 сехет, 2-4 классенче – 22-шер сехет, 5 класра – 31, 6 класра – 32, 7 класра – 34, 8-9 классенче – 35-шер, 10-11 классенче – 36-шар.

**Депутатсен ларăвĕ**

## Черетсĕр 41-мĕш лару ĕçлерĕ

Депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 41 ларăвĕ июнĕн 9-мĕшĕнче райадминистрацин ларусен залĕнче ĕçлерĕ.

Депутатсем район Уставне улшăнусемпе хушăмсем кĕртрĕç, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсене суйламалли округсен схемисене çирĕплетрĕç.

**Кĕскен**

## Июнĕн 12 – 14-мĕшĕсенче канатпăр

**Июнĕн 12-мĕшĕ – Раççей кунĕ, уяв. Уяв кунĕ шăмата лекнĕрен кану кунне тунти куна куçараççĕ. Çапла вара июнĕн 12, 13, 14-мĕшĕсенче канмалла пулать. Июнĕн 11-мĕшĕнче, уяв умĕнхи кун, пĕр сехет сахалтарах ĕçлемелле.**

**Çапла пĕлтернĕ Роструд пуçлăхĕн çумĕ Иван Шкловец.**

**Саламлатпăр**



Юратнă мăшăра, аттене – Çĕньял Апаш ялĕнче пурăнакан **Николай Емельянович ФЕДОРОВА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Пурнăç çулĕпе утма çирĕп сывлăх, вăй-хал сунатпăр. Эсĕ çĕр ĕçĕнче ырми-канми тăрăшнипе тивĕçнĕ хисеп ял-йышра малашне те ан чактăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлансах пытăр. Çемьери кĕреке тăвансемпе, юлташсемпе пуян пултăр. Эпир сана телей сунатпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисем.**

Дорогую и любимую дочь, жену, сестру, маму и бабушку – **Галину Андреевну СПАСКИНУ**, проживающую в селе Моргауши, поздравляем с юбилеем!



Все, сколько суждено прожить нам лет,  
Тебя благодарим, не уставая,  
За то, что подарила белый свет  
Когда-то нам, ты наша дорогая!  
За то, что с нами не спала ночей,  
И лакомый кусок не доедая,  
Все, сколько суждено прожить нам дней,  
Благодарим тебя, наша родная!  
Сегодня в этот День рожденья твой  
Перед тобой колено преклоняем,  
И мы хотим, чтоб вечно молодой  
Всегда была ты, мама дорогая,  
Чтобы не старилась ни сердцем, ни душой,  
Ни болей и ни горестей не зная!  
Тебя сегодня в День рожденья твой  
Мы, мамочка, сердечно поздравляем!

**С поздравлением: мать, братишка, муж, дочери, зятья, сын и внучка.**

**Çырăнтару – 2010**

**Хаклă вулакансем!**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унчченхи хакпах çыраççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Яланах пĕрле пулар!**

**Райхаçат редакцийĕ.**

# Ĕçре ăста пулни кирлĕ



*Тăрăшуллă та ăста специалистсем пурри – кирек мĕнле ĕçре те тĕп шăнăр. Акă Раççейри «Россельхозбанк» уçă акционерлă обществăн Чăваш Республикинчи филиалăн Муркашри хушма офисĕн коллективĕ те пултаруллă специалистсенчен йĕркеленнĕ. Вĕсенчен пĕри – Регина Валерьевна Волкова аслă экономист. Çитес вырсарни кун «Россельхозбанка» йĕркеленĕренпе 10 çул çитнине лайăх кăтартусемпе кĕтсе илес тесе ĕçтешĕсемпе пĕрле вăл та ырми-канми тăрăшать. Ял хуçалăх комплексне кредит парассипе малта пыракан банк тивĕçтерекен услугăсемпе çынсене яланах тĕплĕн паллаштарать, ăшă кăмăлпа калаçать. Офисра çакнашкал специалистсем вăй хуни клиентсене те тивĕçтерет.*

*Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.*

**Чăваш автономине туса хунăранпа 90 çул çитнĕ май**

# Учитель – патшалăхăн пархатарлă ĕçченĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).**

Паллах, çăмăл пулман çак тапхăрта ĕçленĕ вĕрентекенсене. Революци хыççăн Чĕмпĕрти чăваш учителĕсен шкулне салатса яни те нумай чăрмав кăларса тăратнă. Анчах та Иван Яковлевич Яковлев тунă ĕçсем çухалман. Кунтан вĕренсе тухнă вĕрентекенсем тин çеç туса хунă Чăваш автономи облаçне çĕклеме пулăшнă. Вĕсем хушшинче Якаткасси ялĕнче çуралса ӳснĕ Тимухха Хĕветĕрĕ (Федор Тимофеевич Тимофеев) та пулнă. Вăл тăван Чăваш патшалăхĕ валли çамрăк специалистсем хатĕрлес ĕçре нумай вăй хунă, тĕпчев ĕçĕсем ирттернĕ, вĕрентӳ кĕнекисем çырнă.

Çавăн пекех çак çулсенче Шарпаш тăрăхĕнчи паллă революционерăн Семен Ивановăн çемйинчен тухнă Мария Кирилловна та Чăваш автономине çĕклес тĕлĕшпе нумай тăрăшнă. 1921–1922 çулсенче Чăваш автономи республикин халăха вĕрентес ĕç комиссариатĕнче куçару ĕçĕсене туса пынă. 1928 çулхи авăн уйăхĕнче Чĕмпĕрти чăваш учителĕсен шкулне вĕренме кĕнĕ. Вĕрентӳ ĕçĕнчи çитĕнӳсемшĕн ăна «Хисеп палли» орденĕ парса чысланă.

Чăваш патшалăх тытăмне йĕркелес ĕçре партин X съезчĕн йышăнăвĕ те пысăк вырăн йышăннă. Вăл вак халăхсен патшалăх тытăмне çирĕплетесси çинчен, вĕсенче суд, влаç тытăмĕнчи ĕçсене тăван чĕлхепе туса пырасси çинчен, тăван чĕлхепе хаçат-журнал кăларасси, кĕнекесем пичетлесси, шкулсенче вĕрентӳ ĕçне тăван чĕлхепе туса пырасси çинчен. Паллах, çак ĕçе чи малтанах чăвашран тухнă вĕрентекенсем явăçнă, вырăнти халăх хушшинче ăнлантару ĕçне те туса пынă.

2010 çул – Учитель çулталăкĕ. Чăваш автономине туса хунăранпа 90 çул çитнине уявланă май пирĕн хамăрăн патшалăх тытăмне йĕркелеме пулăшнă, ăна яланах никĕслесе тăнă вĕрентекенсем çинчен манмалла мар. Тĕнчере темĕн те паттăрла професси те пур: космонавтсем, разведчиксем, çар çыннисем тата ыттисем те. Анчах вĕсене вĕрентсе кăлараканĕ, пурнăç çулĕ çине тухма пулăшаканĕ яланах вĕрентекен пулнă. Паян та вĕсем нумаййăн. Эпĕ вĕсене патшалăх тытăмне тытса тăракансем тесе хакласшăн. Мухтав сана, учитель! Чăваш автономине туса хума пулăшакансене, чăвашлăха тытса тăракансене тайма пуç.

**В. ВАСИЛЬЕВ,**
**Чăваш Республикин вĕрентӳ ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**

# Ашшĕ-амăшĕн ответлăхне ӳстермелле

**Воспитани ыйтăвĕсемпе**

Ачасем – пирĕн пуласлăх, тетчĕç малтанах. Çавна май ун чухне ачасене тĕрĕс воспитани парасси çине пысăк тимлĕх уйăратчĕç. Мĕн пĕчĕкрен пуçласа çитĕнекен ăрăва тĕрлĕрен майсемпе сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăнма вĕрентетчĕç тата нравственноç шайне ӳстерессишĕн тăрăшатчĕç. Хальхи пек пур кирлĕ-кирлĕ мара ачасене телевизорпа та, кинотеатрсенче те кăтартман. Интернет пирки вара ун чухне сăмах та пулман. Эрех-сăра ĕçесси, наркотиксемпе пăтранасси, пирус туртасси те шкул ачисем хушшинче сарăлман.

Паянхи кун та «çӳлте ларакансем» ачасене пирĕн пуласлăх тесе хаклаççĕ. Анчах та чăн пурнăç çакна урăхла çирĕплетсе парать. Ачасемшĕн паракан патшалăх пособийĕ çуллен пĕр-икĕ памперс илмелĕх шайра кăна тытăнса тăрать. Шкулта апатланма ачасем валли пĕр тенкĕ те уйăрса памаççĕ. Шкулсенчи классене юсама та ашшĕ-амăшĕсен кĕсйисене «çӳхетеççĕ». Кунсăр пуçне ытти тĕрлĕ йышши тăкаксене те «çемье касси» шучĕпе саплаштараççĕ. Çитменнине тата çулсерен шкулсене хупса пыраççĕ. Ялта вара шкул хупрĕç пулсан ку вăл çак ялăн нимĕнле малашлăх та çуккине кăна пĕлтерет.

Кунсăр пуçне çакна аса илер. Ачасене октябренока, пионера, комсомола илни епле хавас самант пулнă. Çак ача-пăча, çамрăксен организацийĕсем никама та нимĕнле те сиен кӳменнине кам хирĕçлеме пултарĕ-ха? Ун чухне япăх вĕренекенсене, тĕрлĕрен киревсĕр ĕçсем тăвакансене тӳрех сӳтсе яватчĕç, намăслантаратчĕç. Çĕр-шыва юратма, аслисене хисеплеме, таса чунлă, ĕçчен пулма, чĕр чунсене юратма... вĕрентетчĕç. Çакăн пек воспитанин кăтартăвĕсем те куç кĕретех пулнă.

*Чылайăшĕ ют çĕр-шывсенчен килекен «çĕнĕлĕхсене» пуç тайсах хисеплет. Хăйсем вара кайран сисмесĕрех пĕртен-пĕр пепкинчен «этеме майлă чĕр чун» ӳссе çитĕннинчен тĕлĕнеççĕ, ӳкĕнеççĕ, макăраççĕ. Çурт-йĕре тĕрĕс мар тусан ăна сӳтсе çĕнĕрен тума пулать, ачаран вара тепĕр хут йĕркеллĕ, çĕр-шыва, ашшĕ-амăшне юрăхлă этем тума май çук.*

Хальхи пекех пурăнсан вара эпир ăçта кайса тухăпăр-ха? Ахальтен мар ĕнтĕ пирĕн çĕр-шывра çапкаланса çӳресе шкула та кайман, ашшĕ-амăшĕсĕр ачасен хисепĕ ӳссех пырать. Кун пек ачасем мĕнле çынсем пулса ӳсĕç-ши вара?

Манăн çакăн пек тĕслĕх илсе кăтартас килет. Иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче нимĕç фашисчĕсем пирĕн çĕр-шывран нумай-нумай çамрăка Германие ĕçлеме хăваласа кайнă. Вара Майданекри концлагерьте пирĕн хĕрсене тĕрĕсленĕ хыççăн вĕсен 90 проценчĕ яхăн хĕр чысне çухатманни паллă пулнă май концлагерь ертӳçи Гитлер патне çыру ярать. Çырура вăл Совет Союзĕпе çапăçма чарăнса мир тума ыйтать. Хăйĕн ыйтăвне вăл çапла сăлтавлать: «Нравственноç енчен çакăн пек çӳллĕ шайри халăха çĕнтерме май çук»,– тет. Паянхи пурнăçра вара... пĕтĕмпех пуç хĕрлĕ.

Паллах, малтанхи вăхăтра ашшĕ-амăшĕн ачисене тĕрĕс воспитани пама майсем ансатрах пулнă. Паян вара, патшалăх ертӳçисем çак питĕ пĕлтерĕшлĕ ыйтăва çем çине кирлĕ пек тимлĕх уйăрманнине пула, çемьери воспитани ыйтăвĕсен пĕлтерĕшĕ калама çук ӳсрĕ. Анчах нумай ашшĕ-амăшĕ çакна ăнланмасть-ха.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи ашшĕ-амăшĕсен комитечĕн председателĕ пулнă май, эпĕ нумай чухне тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп. Ашшĕ-амăшĕсен ытларах пайĕ хăйсен ачисен вĕренĕвĕпе, вĕсен шкулти пурнăçĕпе пачах интересленмест. Хăшĕ-пĕри шкулне те кĕрсе курман пулĕ. Шкулта ашшĕ-амăшĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртнĕчĕ. Пухăва районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем М.А. Конузина, В.П. Петров, çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн представителĕсем те пынăччĕ. Вĕсем ашшĕ-амăшĕсене усăллă канашсем, сĕнӳсем нумай панăччĕ, тĕрлĕрен саккунсемпе паллаштарнăччĕ. Вĕсемпе пĕрлех шкул директорĕн ачасене вĕрентес енĕпе ĕçлекен çумĕ Н.Б. Горнова, воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ Е.И. Гунина питĕ пĕлтерĕшлĕ ыйтусем çинче чарăнса тăчĕç. Шел пулин те, çак пухăва ашшĕ-амăшĕсен 80 процентне яхăн пыма кăмăл тумарĕ. Камсемшĕн тăрăшаççĕ-ха шкулти учительсем? Пирĕн ачасемшĕн мар-и? Юратьха вĕсем сирĕн ачасене шкулта вĕренĕ вăхăтра чăтĕç. Сирĕн вара, хăвăр айăплă пулсан, ĕмĕр вĕçне çитиччен чăтма лекĕ. Çапла пултăр текенни пĕр ашшĕ-амăшĕ те çук пулĕ тесе шутлатăп. Çапла пулин те ашшĕ-амăшĕ шкул пулăшăвне хисеплемени тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерет. Нивушлĕ вĕсем хăйсене çав териех ăслă тесе шутлаççĕ?

Ачаран лайăх, çĕр-шыва юрăхлă çын тума çăмăл мар терĕмĕр. Патшалăх кашни ача пуçне пĕр çул вĕрентме вуншар пин тенкĕ тăкаклать. Çавăнпа та шкулта хăйсене йĕркеллĕ тытман, кирлĕ пек вĕренмен ачасен ашшĕ-амăшĕсенчен çирĕпрех ыйтмалла, вĕсен ответлăхне ӳстермелле.

**П. ВОРОБЬЕВ,**
**депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.**

**Ыйту – хурав**

# «Дача амнистийĕн» ыйтăвĕсемпе

***Енчен те çĕр участокĕ çинче вырнаçнă çурт-йĕр еткерлĕхпе е ытти майпа (вăл шутра суту-илӳ килĕшĕвĕпе те) харпăрлăха куçнă пулсан, кун пек çĕр лаптăкне регистрацилеме май пур-и?***

– Май пур. Чи малтанах çурт-йĕрĕн малтанхи хуçин çав çĕр унăн пулнине çирĕплетекен документ кирлĕ пулать.

***Енчен те çĕр участокне панине çирĕплетекен документа ăна мĕнле правăпа панине кăтартман пулсан мĕн тумалла?***

– Кун пек çĕр участокĕ харпăрлăха панă шутланать. Анчах та Çĕр законодательствипе килĕшӳллĕн çĕр участокне уйрăм çын харпăрлăхне пама май çук пулсан кун пек ирĕкпе усă курма пулмасть.

Енчен те сад, дача е пахча çĕр участокне çынна ĕмĕр усă курма панă пулсан гражданин çĕрпе усă курмалли правăна регистрацилеме пултарать.

***Çĕр участокне харпăрлăха çирĕплетессипе чару пур-и?***

– Çапла, вĕсем пур. Вăйра тăракан законодательствăпа килĕшӳллĕн хăш-пĕр çĕр участокне харпăрлăха валли патшалăх регистрацийĕ тума юрамасть. Кусем вĕсем çаврăнăшран кăларнă тата çаврăнăш енĕпе чикĕленĕ çĕр участокĕсем. Сăмахран, çут çанталăк заповедникĕсем е наци паркĕсем, вăй структурисем е атом энергетикин, культура тĕлĕшпе пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан объектсем вырнаçнă çĕр участокĕсем.

***Çĕр пурри пирки пĕр документ та çук пулсан, мĕн тумалла-ха?***

– Енчен те документсем çук, анчах та çĕре килти хушма хуçалăха тытса пыма уйăрса панă пулсан çак харпăрлăха тăрăх регистрацилес тесен вырăнти самоуправлени органне каймалла пулать. Кунтан хуçалăх кĕнекинчен çырса илнине (выписка) тăратмалла. Вырăнти самоуправлени органĕ выпискăна икĕ экземпляр парать. Унăн формине Федераллă регистраци службин 146 № хушăвĕпе 2006 çулхи августăн 29-мĕшĕнче çирĕплетнĕ.

***Ансатлатнă мелпе гражданин миçе çĕр участокне харпăрлăха куçарма пултарать?***

– «Дача амнистийĕ» пирки калакан саккунра пĕр гражданин хăйĕн харпăрлăхĕнчи миçе çĕр участокне ансатлатнă мелпе усă курса патшалăх регистрацийĕ тума пултарасси пирки каламан. Апла пулсан чару пулма пултараймасть.

***Çĕр участокне патшалăх регистрацийĕ тунăшăн мĕн чухлĕ тӳлемелле?***

– Килти хушма хуçалăх, дача хуçалăхĕ, пахча е сад, харпăр хăйĕн гаражĕ валли, пурăнмалли çурт-йĕр тума уйăрнă çĕр лаптăкне харпăрлăха куçарма патшалăх регистрацийĕ тунăшăн 200 тенкĕ тӳлемелле пулать.

***Çĕр участокĕ çинче вырнаçнă куçман пурлăх объекчĕсене регистраци тăвасси епле пулать-ха?***

– Енчен те çĕр участокĕ тĕлĕшпе документсем йĕркеллĕ пулсан унта вырнаçнă çурт-йĕр харпăрлăхĕн правине çирĕплетессипе ыйăрлăх çук. Дача тата сад çурчĕсен харпăрлăхĕн правине регистрацилеме халĕ техника инвентаризацине ирттерни кирлĕ мар. Куçман пурлăх объекчĕ тĕлĕшпе ятарлă деклараци туса хатĕрленĕ. Унта объект ăçта вырнаçнине, унăн ятне тата унпа мĕн валли усă курассине, лаптăкне, миçе хутлă пулнине тата ытти даннăйсене палăртаççĕ. Гаражсемпе хуçалăхра усă куракан хушма çурт-йĕре те харпăрлăха куçарма пулать. Регистраци тунă чухне çăпах ĕнтĕ деклараци тĕп документ пулса тăрать.

***Куçман пурлăх объекчĕсене регистрацилемелли деклараци бланкĕсене ăçта илме пулать тата унти графасене çырса парассипе ыйăрлăхсем пулсан мĕн тумалла?***

– Деклараци бланкĕсем документсем йышăнакан управлени пайĕсенче пур. Кунпа пĕрлех деклараци бланкĕсене Управленин интернет-сайтĕнче (www.rosreg21.ru) вырнаçтарнă. Декларацисене çырса панă чухне йывăрлăхсем ан пулччăр тесе управлени сотрудникĕсем тĕслĕх бланксем туса хатĕрленĕ. Вĕсемпе граждансем документсене йышăннă çĕрте паллашма пултараççĕ. Унпа пĕрлех управлени сотрудникĕсем те кашни çынах деклараци çырассине ăнлантарса пама пултараççĕ.

**Надежда ЯКОВЛЕВА,**
**Федераллă регистраци службин Чăваш Республикинчи управленийĕн документсем парас-илес енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.**

**Вулакан пултарулăхĕ**

# Ĕмĕр сакки

Вăçкассинчи Т. МИХАЙЛОВĂН З.Л. Лукинана халалланă «Ĕмĕр сакки» хайлавĕнчен илнĕ йĕркесем

Кантăкран пăхса ларнă
Ир те каç вăл выçăллах,
Ангела шанса кĕтнĕ –
Чĕрĕ чун пурăнмаллах.

Усрава ăна илнĕ,
Тăлăха юнăскере.
Çемьере асли пулнă,
Ĕçлеттернĕ тек хĕре.

Тем пекех тăрăшсан та,
Илтеймен вăл ыр сăмах.
Чунтанах ывăнсан та,
Çук канма вăхăт чăнах.

Ачаран кĕтӳ пăхнă,
Хĕрхенмен хаяр нуша.
Килĕрен ыйтма кайнă,
Тупăнман пуян хуçа.

Ыраша шĕкĕлченĕ
Çăкăр пек кăшт чăмлама,
Хур хуçха писĕн писнĕ,
Ăш шӳрпе чуна уçма.

# Вăй хунин кăтартăвĕ куç умĕнче

**Конкурсран**



«Ăмăрту условийĕсем кашниншĕнех паллă, анчах кам çĕнтерĕши?» – пуç ватать Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри ĕне сăвакан Е.М. Андреева.

Ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.А. Калинин сăмах калать.





Надя Журавлевăн сĕт витри тулсах пырать. Япăх мар кăтарту.

Çамрăксем хушшинчи ăмăртура çĕнтернĕ В. Максимова (варринчи), Е. Андреева, А. Волкова хисеп картлашки çинче.

Ырăпа палăрнă В. Димитриева (варринчи), А. Васильева, Ф. Максимова техник-осеменаторсем.



Çамрăк техник-осеменатор тин кăна Ильич яч. хис. хуçалăхра ĕçleme пуçланă.





**(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).**

Кашниех вăхăт пуррипе усă курса Йӳçкассисен фермипе, кунти ĕç условийĕсемпе паллашать, хăйсем патĕнче пурнăçа кĕртме май пуррине шырать. Палăртмалла, район шайĕнче ирттернĕ çакнашкал ĕçлĕ тĕл пулăва кашни хуçалăхранах хутшăнма кăмăл турĕç. Хăшĕсенчен ăмăртăва икшер оператор та килсе çитнĕ. Вĕсем ăмăртура туптанă ăсталăхпа производствăра усă курасси пирки иккĕленӳ çук.

Ăмăртăва хутшăнакансем умĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.А. Калинин сăмах калани асра юлчĕ:

– Ырă йăлана кĕнĕ çак лайăх конкурса кун йĕркинчен кăларманни эпир пурсăмăр та малалла пăхнине çирĕплетет. Пирĕн вара умри тĕллевсем пысăк. Вĕсене пурнăçлама çĕннине алла илмелле. Паянхи конкурса хутшăнса эпир çав çĕнĕлĕхсене алла илме хатĕр пулнине кăтартмалла, – терĕ конкурса хутшăнакансене ăнăçу сунса Владимир Аркадьевич.

Хыççăн районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕпе паллаштарса район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов сăмах каларĕ. Вăл паян фермăра ĕçлекенсем район экономикишĕн питĕ сăваплă ĕç тунине, çак тытăмра «Ударник» хуçалăх тĕреклĕхпе палăрса тăнине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пачĕ. Район пуçлăхĕ çĕннине алла илмесĕр малашлăх аталану ик телейлĕ пулнине те палăртрĕ. Çĕннине алла илесси вара конкурсра курăнать те ĕнтĕ.

– «Ударник» хуçалăхăн Йӳçкассинчи сĕт фермин çитес хĕле хатĕр сарайне кĕрсен кунти тасалăх тыткăна илет. Унти хĕвел çутипе тулнă пӳлĕмсем кунти ĕçченсем хăйсен ĕçĕ çине ответлăха туйса пăхни, вĕсем ĕçре тирпейлĕхе мала хуни, юсав ĕçĕсем пыни вĕсем малашлăха пăхни пирки калать, çаксем пурте пĕрле ăнăçу никĕсĕ пулни курăнать, – терĕ ăмăртăва хутшăнакансене фермăри ĕçсемпе тĕплĕнрех паллашса кайма сĕнсе Юрий Александрович.

...Ăмăртăва килнĕ техник-осеменаторсемпе машинăпа ĕне сăвакан операторсем хăйсен ăсталăхĕпе пултарулăхне ушкăна пайланса кăтартрĕç пулин те, кашни номинацирех ăмăрту çивĕч пулчĕ. Уйрăммăн илсен конкурса килнĕ дояркăсемпе доярсем малтан теори пĕлĕвне кăтартнă хыççăн жюри членĕсем умĕнче сĕт сумалли аппарата вăхăтра сӳтсе пуçтарассипе тата ĕне сăвассипе, техник-осеменаторсем хăйсен ĕç йĕркипе тата ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерес культура пĕлĕвĕпе ăмăртрĕç.

– Конкурса ирттерме çуллен хутшăннăран тата тăтăшах жюри членĕ пулнăран ĕне сăвакансемпе техник-осеменаторсен пĕлĕвĕ ырă еннелле улшăнни курăнать. Тăтăшах çак конкурса хутшăнакансен малтуртăмлăхĕ малалла утăмлани яр уççăн палăрать, – терĕ конкурссем вĕçленсе пынă май районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин тĕп врачĕ Н. Яковлев. Специалист çапла хак пани – конкурсăн чи курăмлă енĕ. Чăнах та конкурса хутшăнакансем ăмăртăвăн нихăш енĕпе те çухалса кайманни вĕсем хăйсен ĕçĕнче чăн-чăн ăстасем пулнине çирĕплетрĕ.

– Ĕçе пĕлсе тата юратса пурнăçлатпăр пулсан мĕншĕн пирĕн çĕнтерӳçĕсен картлашки çине хăпармалла мар-ха? – ыйтуллăн хуравларĕç Чкалов яч. хис. хуçалăхри Исетерккĕрен килнĕ Елизавета Федоровăпа Татьяна Тимофеева операторсем.

Каçхи сăвăмпа вĕçленнĕ конкурс çĕнтерӳçĕсене çапла пайларĕ.

Çамрăксем хушшинче «Ударник» хуçалăхран ăмăртăва тухнă Валентина Александровна Максимовăна çитекенни пулмарĕ. Тăтăшах ĕнесене машинăпа сăвакан операторсен конкурсне хутшăнса çӳлти картлашкана çĕнсе илекенскерĕн кăçалхи ӳсĕмĕ те кĕтмен утăм мар. Ун хыççăнхи вырăнсенче Е. Андреев яч. хис. хуçалăх операторĕпе Елена Андреевăпа «Ударник» хуçалăхри Алиса Волкова.

Тĕп дояркăсем хушшинче Суворов яч. хис. хуçалăх ĕçченĕпе В.В. Макаровăпа «Оринино» хуçалăх доярки Г.П. Ковалева хушшинче хăйне евĕр чăн-чăн ăмăрту пулчĕ. Кăçалхи конкурсра Валентина Валерьяновна маттуртарах пулни курăнчĕ. Виççĕмĕш вырăнта та Суворов яч. хис. хуçалăх представителĕ пулни Анаткассинче фермăри ĕç-хĕле тивĕçлĕ шая çĕкленине кăтартрĕ. Çапла вара пьедестал çинчи виççĕмĕш картлашка çине хăпарма тивĕçнĕ Надежда Журавлева хăйсен хуçалăхĕнчи ăнăçлă малашлăха çирĕплетрĕ çеç.

Арçын доярсем хушшинчи çĕнтерӳçĕ «Оринино» хуçалăхри Арсентий Алексеевич Казамбаев уйрăм парнене тивĕçрĕ.

Çак кун тепĕр пысăк ăмăрту, маларах палăртрăм ĕнтĕ, техник-осеменаторсем хушшинче те иртрĕ. Кунта та çивĕч кĕрешӳ пулчĕ. Суворов яч. хис. хуçалăхри хăй ĕçĕнче яланах ырăпа палăрнă Фаина Николаевна Максимовăна кăçал виççĕмĕш вырăна тивĕçни те кĕрешӳ вăйлă пулнине çеç çирĕплетрĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Е. Андреев яч. хис. хуçалăхран конкурса пынă Александра Владимировна Васильева. Çĕнтерӳçĕ хăйăвне вара кăçал «Ударник» хуçалăхри Валентина Алексеевна Димитриева тивĕç пулчĕ.

Яра куна тăсăлнă конкурс ăнăçлă иртрĕ. Вăл районти выльăх пăхакансем хушшинче маçтăрсем, хăйсен ĕçне чунĕпе парăннисем сахал мар иккенне кăтартрĕ. Конкурса хутшăнакансене Йӳçкассинчи ваттисен çуртĕнче ĕçлекенсемпе Культура çурчĕ çумĕнчи çамрăксен «Туслăх» эстрада ушкăнĕ çепĕç юрăсемпе савăнтарчĕ, тивĕçлĕ кану йĕркелесе пачĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Новые тарифы от МегаФона, сказочные предложения



Дети любят переиначивать старые сказки на новый лад. Современная версия про Машу и медведя в пересказе одной восьмилетней девочки звучит так: «А Машенька медведю говорит: «Не садись на пенек, не порти мне связь!»

Представить медведя с сотовым непросто, но представить человека без мобильного сегодня еще сложнее. По исследованиям специалистов, пользователи сотовой связи делятся на две группы: для одних из нас телефон – вроде домашнего любимца, который помогает бороться со скукой, развлекает и поддерживает связь с миром; для других – это прежде всего возможность вовремя получить необходимую информацию.

А способов для этого существует много – и отправить SMS, и скинуть фотографии, и послать электронное письмо через мобильный Интернет, и просто позвонить. Для нашего удобства МегаФон создал новый тарифный план **«Всю включено»**, который обслужит нас на пятизвездочном уровне. При подключении каждый абонент получает **бесплатно** целый ворох подарков:

- 1000 минут исходящих звонков внутри сети (абонентам МегаФона в Чувашии);
- 1000 Мб Интернет-трафика.
- 100 минут исходящих звонков на все другие телефоны (мобильные других операторов Чувашии, ГТС Чувашии) и внутри сети (МегаФон в Поволжье);
- 150 SMS-сообщений по России;

И это всего за **9 рублей в сутки (270/279 рублей в месяц)**

Кстати, об Интернете: старинная угроза «в деревню, к тетке, в глушь!..» сегодня теряет свою актуальность. Какая же это глушь, если до родных и друзей рукой подать – достаточно подключить к компьютеру или ноутбуку МегаФон 3G модем и домашний Интернет без проводов сделает жизнь интереснее. Последние новости и самые важные электронные письма, любимые фильмы и новая музыка доступны в любом районе Чувашии, на даче и даже на пляже – причем на самых высоких скоростях.

Новый тарифный план «МегаФон-Логин Безлимитный» предлагает два уровня скорости – в зависимости от типа выбранного модема. Модель E1550 обеспечит вас неограниченным количеством GPRS-Internet трафика всего за 299 рублей и скоростью до 3,6 Мбит/сек.

А если в вашем населенном пункте уже запущена сеть 3G от МегаФона, то вам обязательно пригодится МегаФон-модем 1750, так же с неограниченным количеством GPRS-Internet трафика со скоростью до 7,2 Мбит/сек. Этот комплект обойдется в 399 рублей.

Сеть «МегаФона» покрывает всю Чувашию, в каждом населенном пункте республики можно пользоваться достижениями цивилизации – быстрым беспроводным Интернетом от компании высоких технологий. Необходимо просто подключить МегаФон модем к компьютеру, и тогда на скоростях 3 G вам откроется весь мир.

# Муркашсем – республика форумĕнче



*Июнĕн 3-6-мĕшĕсенче Муркаш районĕнчи активлă çамрăксен делегацийĕ «МолГород» республикăри çамрăксен вĕрентӳ форумĕн ĕçне хутшăнчĕ. Делегацире районти çамрăксен парламенчĕн, Муркашри тĕп больницăри «Çамрăк чĕресем» пĕрлешĕвĕн членĕсем, çамрăк предпринимательсемпе çамрăк çемьесем пулчĕç.*

*Тăватă куна тăсăлнă форумра пĕтĕмĕшле 40 мастер-класс ĕçлерĕ: «IT-технологисем», «Экологипе туризм», «Экономикăпа предпринимательство» тата ытти енлĕ чылай секци. Çак ĕçре çамрăксем хальхи тата малашлăхра кирлĕ çивĕч ыйтусене тишкернипе пĕрлех хăйсен пултарулăхне те тĕрĕслерĕç. Пирĕн делегацири Григорий Григорьевпа Андрей Петров тĕрлĕ номинацисенче çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç.*

*Çамрăксем хăйсене «килти пек» туйччăр тесе вара Сергей Волков предприниматель хуçалăх ĕçĕсене аван пурнăçларĕ. Делегаци ĕçне пĕтĕмĕшле йĕркелессине хăй çине Олег Терехин илчĕ. Вĕсене форума хутшăннă çамрăксем тав сăмахĕ калаççĕ.*

**Е. ЧЕРНОВА,**
**вĕрентӳ пайĕн çамрăксемпе ĕçлекен специалисчĕ.**

Милици хроникинчен

## Вĕри утюгпа хăратнă

Çĕнĕ Матьăкра пурăнакан пĕр арçын хăйĕнчен аслăрах хĕрарăм патне хăнана каять. Йĕркеллĕ калаçу вара темĕнле майпа хирĕçĕве куçать. Арçын кил хуçине вĕлерессипе хăратма тытăнать: хĕрарăмăн пичĕ патне утюг тытать. Ăна вара вĕрилентерес тесе розеткăна чикет. Çак тискер ĕçе тунăшăн халĕ явапне саккунпа килĕшӳллĕн тытмалла пулать.

## Ача-пăча паркĕнче – пысăккисен «теттисем»

Шупашкар районĕнчи пĕр ялта çуралса ӳснĕ, пĕр вырăнта тĕпленсе пурăнман арçын вунă кун хушши Муркашри ача-пăча паркĕнче çӳренĕ. Паллах, кашни кун чуччупа ярăнма кайман вăл унта. Пиртен çĕленĕ хутаç вырăнтах пулнине тĕрĕслесе тăнă. Хутаçĕ вара ахальли пулман: унта патрон пек япаласем упраннă унăн. Пĕрре мар, 500 ытла! Халĕ ку ĕçпе следстви пырать.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Редакци почтинчен

## Паллă ентешсене пĕлмелле

Иртнĕ вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче эпир, 5 класра вĕренекенсем, пирĕн районти Купăрля ялĕнчен тухнă чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, «Хыпар» хаçата пуçарса яраканĕ Н.В. Никольский çинчен вĕрентĕмĕр. Пирĕн шкулти чăваш чĕлхипе литературин пӳлĕмĕнче ун çинчен ятарлă стенд та пур. Нумай пулмасть вара эпир çак ăсчах çуралнă вырăна турпоход-экскурси йĕркелесе çитсе килтĕмĕр.

Ирех велосипедсем çине ларса «Тойкилтĕ – Сосновка» маршрутпа çула тухрăмăр. Пирĕнпе пĕрле çиччĕмĕшсем те пыма кăмăл турĕç. Çулĕ çывăх мар та (пĕр майлă 15 çухрăм), велосипед кустăрмисене çавăрттарса самаях тар кăлартăмăр. Çул çинче эпир çул-йĕр правилисене пăсмарăмăр: пĕр ретлĕ колоннăна пĕр-пĕрин хушшинче 5-7 метр хушă хăварса пытăмăр. Малта – пирĕн класс ертӳçи, хыçалта – çиччĕмĕшсен.

Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕ умĕнче пире Н.В. Никольский музейĕн директорĕ кăмăллăн кĕтсе илчĕ. Музейри экспонатсемпе паллашнă хыççăн эпир Николай Васильевичăн пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ пулнине пĕлтĕмĕр. Вăл чăнчăн чăваш интеллигенчĕ пулнă. Татьяна Зиновьевна пирĕн ентешĕн пурнăçĕнчи паллă та кăсăклă самантсем çинчен питĕ тĕплĕн каласа пачĕ.

Каялла таврăннă чух Исетерккĕ ялне кĕрсе тухрăмăр. Унта кĕçĕн классем вĕренекен шкул умĕнче Татьяна Николаевна Николаевăна халалласа лартнă палăк пур. Вăл Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине сакăр ывăлне ăсатнă. Вĕсенчен тăваттăшĕ çеç каялла таврăннă. Пĕри – Григорий Алексеев – Совет Союзĕн Геройĕ. Тепри – Егор – Александр Матросов паттăрлăхне тепĕр хут кăтартнă.

Çак экскурси пирĕн асра нумайлăха юлĕ.

**Светлана БЕРЕЗОВĂПА**
**Светлана ВЛАДИМИРОВА.**
Тойкилтĕ шкулĕ.







**ООО НПП «Карина»**
**в новом офисе продаж в селе Б. Сундырь**
принимает заявки на изготовление
ОКОН, ДВЕРЕЙ и БАЛКОННЫХ РАМ
Пластиковых, Деревянных и Алюминиевых
**ТОЛЬКО ПЕРВЫЕ 100 ОКОН СО СКИДКОЙ 35%**
Стеклопакеты
Отливы, козырьки
Сетки москитные
Жалюзи и услуги по нарезке стекла
**г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 7.**
**Тел. 8 (8352) 48-13-31, 56-07-01, 57-40-26**
**с. Б. Сундырь, ул. Советская, д. 21,**
**тел. 8 (83541) 69-3-16, 48-13-31**
(здание бывшей столовой РТП) 2-5.

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР» с установкой, гарантией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 4-6.**

oriflame
**СУПЕРАКЦИЯ!**
**Стань звездой с ОРИФЛЭЙМ!**
**Зарегистрируйся в компании за 10 рублей с 7 июня по 10 июля 2010 года, выполни условия акции, получи гарантированный подарок – ЗВЕЗДНАЯ ПАЛИТРА ОТ АНИ ЛОРАК! Тел.:+79063812560, +79520200029, 83541-62-7-73. 1-2.**

Прогноз погоды с 11 июня по 18 июня www.yandex.ru

| пт 11 | сб 12 | вс 13 | пн 14 | вт 15 | ср 16 | чт 17 | пт 18 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| переменная облачность | переменная облачность, небольшой дождь | переменная облачность | дождь, гроза | ясно | переменная облачность | переменная облачность | переменная облачность |
| +22 | +25 | +32 | +32 | +23 | +22 | +21 | +25 |
| +10 | +19 | +20 | +13 | +11 | +11 | +7 | +12 |

**ОАО «Молочный завод «Цивильский» примет на работу сборщиков молока. Закупает молоко, дорого. Тел.: 89373830797. 2-3.**

**Продаем срубы хвойные, липовые, осиновые, готовые и на заказ, доставка бесплатно. Доски любые. Требуются плотники, пилорамщик на ленточную пилораму, водитель на «Газель» грузопассажирский. Куплю кругляк: осину, липу, хвою. Тел.: 8-906-387-86-46.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 27-38.**

* * *

**Требуется сборщик мебели в с. Моргауши. Тел.: 8-917-679-87-61**

* * *

**Продаю новую двухкомнатную квартиру в кирпичном доме по ул. Парковая, площадью 50 кв. м. Имеются балкон, подвальное помещение, индивидуальное отопление. Тел.: 8-917-652-71-99.**

* * *

**Виççĕ пăруланă шурă-хура ĕне сутатпăр, март уйăхĕнче пăруламалла. Тел.: 8-903-063-91-85, 60-2-16. Света.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 2-5.**

* * *

**Оказываем услуги крана, бульдозера, экскаватора, ямобура, автотранспорта. Реализуем вибропрессованные керамзитобетонные блоки. Тел.: (8352)58-05-06, 58-47-85, 45-65-35, мобильный: 8-903-359-62-85, 48-55-79. 2-3.**

* * *

**Продается дом в с. Б. Сундырь. Тел.: 8-906-381-25-10.**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), железобетонные изделия, асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 5-8.**

* * *

**Услуги буровой машины для рытья колодцев, разного диаметра, с доставкой и установкой колец.**
**Тел.: 8-903-379-09-01.** 2-5.

* * *

**Продаем торф, навоз, грунт, ОПГС, песок, щебень, асфальт с доставкой в короткие сроки. Оказываем автоуслуги. Тел.: 44-22-24, 8-905-343-91-07. 2-9.**

* * *

**Продаю блоки керамзитобетонные, песок, гравмассу, бой кирпича, с доставкой.**
**Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 3-5.**

* * *

**Сдается в аренду помещение по ул. 50 лет Октября (30 кв. м.) под офис или магазин. Тел.: 8-905-344-76-36. 2-3.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 6-8.**

* * *

**Раствор, бетон, керамблоки от производителя, цемент. Доставка. Тел.: 8(8352)507-805, 8-903-358-65-34, 8-903-345-66-34. Сертифицировано. 10-17.**

* * *

**Требуются бригады рабочих для работы с мягкой кровлей в Нижний Новгород. Тел.: 89373927300. 3-5.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, щебень, гравий, керамзит с доставкой, 10-13 т. Тел.: 8-905-028-22-25. 3-4.**

* * *

**Продаю кольца колодезные. Цена 1500 руб., с доставкой. Бурение колодцев. Тел.: 89876664140. 2-9.**

* * *

**Продаю: листы оцинкованные, профнастил (крашеные и некрашеные), цемент, шифер, пиломатериал обрезной (хвоя). Адрес: с. Моргауши, магазин «Рука мастера». Тел.: 8-903-346-40-58. 4-5.**

* * *

**Керамзитобетонные блоки, щебень гранитовый, известковый, керамзит, гравмасса, песок речной, карьерный строительный, торф, с доставкой.**
**Тел.: 8-906-383-65-13, 8-903-389-98-62. 4-8.**

* * *

**Агрофирма «Крол» продает кроликов породы: белый великан, серебристый великан.**
**Тел.: 8-905-199-41-90, 8-927-992-89-52. 4-5.**

* * *

**Выдаем займ под материнский капитал.**
**Тел.: 62-8-13, 8-927-995-03-41. 1-5.**

* * *

**ДЛЯ СВЕДЕНИЯ КЛИЕНТОВ МОРГАУШСКОГО ПОЧТАМТА**

**В связи с празднованием Дня государственности России 12 июня для всех отделений почтовой связи объявлен выходным днем.**

**Администрация Моргаушского почтамта.**

Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района и Совет Моргаушской районной организации профсоюза работников народного образования выражают глубокое соболезнование родным и близким по поводу безвременной кончины бывшего директора МОУ «Сыбайкасинская основная общеобразовательная школа»

**СМИРНОВА**
**Ивана Васильевича.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 10.06.2010 г.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.